# Çĕнĕ 2011 çул ячĕпе саламлатпăр!

Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнченпе тухать

111-112 (7853-7854) №№ ✻ Кĕçнерни кун, 2010 çулхи раштав (декабрь) уйăхĕн 30-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ



*Çĕнĕ 2011 çулччен шутлă сехетсем юлаççĕ. Кашниех ăна хавас кăмăлпа, çутă ĕмĕтсемпе кĕтсе илме тăрăшать. Муркашри искусство шкулĕн ачисем ытлари кунах Хĕл Мучипе Юр Пикене ăста ташласа тĕлĕнтерчĕç. Куншăн парнесене тивĕçрĕç (сăн ӳкерчĕкре). Уяв пуриншĕн те уяв пулмалла. Çĕнĕ çул пушшех те. Район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю.А. Иванов тăлăх тата сусăр ачасене, сахал тупăш илекен тата йышлă çемьери ачасене уяв картинче саламларĕ. Кашнинех телей сунчĕ. Вĕсен ĕмĕчĕсем пурнăçланасса эпир те шанатпăр. Çĕнĕ çула ĕç коллективĕсенче те хаваспах кĕтсе илеççĕ. Çĕнĕ тĕллевсем палăртаççĕ. Раштавăн 31-мĕшĕнче вара вăл çемьери чи савăнăçлă уяв пулĕ.*

**КАШНИНЕ САЛАМЛАТПĂР, ĂНĂÇУ СУНАТПĂР!**

**Паян пирĕн вулакансем районти «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçатăн 111, 112 номерĕсене илеççĕ. Эпир вулакан умĕнчи тивĕçе ирттерсе пурнăçларăмăр, çулталăкра пирĕн 104 номер кăлармаллаччĕ. Тăрăшса ĕçлеме пире хаçата çырăнса илекенсен йышĕ уйăхсерен ӳсни хистет.**

**«Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçата çырăнса илекенсене, пирĕн типографие заказ паракансене, учреждени, организаци, предприяти, хуçалăх ĕçченĕсемпе ертӳçисене, ял тăрăхĕсен тата район депутачĕсене, вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен ĕçченĕсене, ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсене, район пуçлăхĕсене, яшсемпе ватăсене çывхарса килекен Çĕнĕ çул ячĕпе саламлатпăр!**

**Кашнинех çирĕп сывлăх, ырă кăмăл, ăнăçу тата телей сунатпăр. 2011 çулта та пĕрле пулар! Пĕр-пĕринпе килĕштерсе пурăнар, пĕрне-пĕри пулăшса пырар.**

**«ÇĔНТЕРӲ ЯЛАВĔ»**
**хаçат редакцийĕ.**

**ХАКЛĂ ЕНТЕШĔМĔРСЕМ!**

Сире çывхарса пыракан Çĕнĕ çул ячĕпе саламлатăп!

Çĕнĕ çул – пирĕн чи юратнă уявсенчен пĕри. Çак вăхăтра эпир иртнĕ çулхи ĕçсене аса илетпĕр. Паллах пурте пулнă: савăнăçĕ те, тĕлĕнмелли те, хуйхи-суйхи те, çĕнĕлĕхсене çул панипе пĕрлех çухатусем чăтса ирттерни те. Вĕсем пирĕн асран тухмĕç. Иртнĕ çула тишкернĕ май эпир хамăрăн çывăх çыннăмăрсем пирки самантлăха та манмастпăр. Малашлăхĕ пирĕн пĕрле. Пирĕн шăпасемпе ĕç-хĕлсенчен, туйăмсенчен республика тата Раççей пурнăçĕ калăпланса пырать.

Историе юлакан 2010 çул позитивлăхĕпе палăрса юлчĕ. Пирĕн пултараслăх пысăккине кăтартрĕ. Пирĕн ĕçсен никĕсĕнче тӳрĕ кăмăллăх тата шанчăклăх, уççăнлăх. Тĕп приоритет – кашни çыннă пурнăç пахалăхне ӳстересси.

Туса çитерменнисем те çук мар-ха. Иртнĕ çулхи ĕçсене пĕтĕмлетсе эпир умри йывăрлăхсене йăлтах çĕнме пултарасси курăнать. Чăваш Енре пурăнакансен хăйсен вăйне шанни малта тăрать. Кунпа пĕрлех унăн тӳсĕмлĕхĕ, ыранхи куна пăхса ĕçлесси, патшалăх пулăшăвĕпе туллин усă курма тăрăшасси тата тăван ене хисеплесси-юратасси малта тăрать.

Çĕнĕ çул чи илемлĕ уяв пулнипе пĕрлех пире хамăр ĕçе хаклама ыйтать. Ачасене, атте-аннесене, тăвансемпе çывăх çыннăмăрсене, çуралса ӳснĕ киле, Тăван çĕр-шыва юратни сивĕ хĕл кунĕсенчи илемлĕ уява та ăшă витĕм парать.

Умра илемлĕ кунсем нумай. Вĕсем сирĕн пур ĕмĕтĕрсем те пурнăçланасса шантараççĕ. Ăна валли кашни çемьере килĕшӳпе çураçу, сывлăх пултăр.

**М.В. ИГНАТЬЕВ,**
**Чăваш Республикин Президенчĕ.**

**ХИСЕПЛĔ ЕНТЕШСЕМ!**

Çитсе килекен Çĕнĕ 2011 çул тата Сурхури уявĕсем ячĕпе чĕререн тухакан чи хĕрӳллĕ салам сăмахĕсем йышăнса илсемĕр.

Çĕнĕ çул – чи çутă та илемлĕ, савăнăçлă та хаваслă уяв. Ваттисем çапла каланă: «Çĕнĕ çула мĕнле кĕтсе илетĕн, çулталăк та çавăн пекех пулать». Çĕнĕ çул сирĕншĕн кăçалхинчен ăнăçлăрах, пуянрах та ырăрах пултăр.

Пурсăра та ырă сывлăх, пысăк телей, ĕçре çĕнĕ çитĕнӳсем, иксĕлми энерги, туслăхпа ăнăçу сунатăп.

Юрату сире хавхалантарса пытăр, шанăç вăй-хăват патăр, ĕненӳ вара чун-чĕрене ăшăттăр!

**Н.М. БУДАРИН,**
**РФ Патшалăх Думин депутачĕ,**
**Раççей Геройĕ, летчик-космонавт.**

**ХАКЛĂ ЕНТЕШСЕМ!**

Сисĕнмерĕ те, 2010 çул хыçа юлчĕ. Çăмăлах пулмарĕ вăл. Апла пулин те пĕр-пĕрне ăнланса ĕçленĕрен, кашни хăйĕн ĕç вырăнĕнче чун-чĕре хушнă пек тăрăшнăран аталану çулĕпе малалла кайма пултартăмăр. Чун-чĕререн тав тăватăп сире çакăншăн.

Çĕнĕ 2011 çулта та пирĕн ĕмĕт-тĕллевсем пĕчĕк мар. Вĕсене пурнăçа кĕртес тесе сирĕнтен кашниех хăвăртан килнине тăвасса эпĕ шансах тăратăп. Малашне те хамăр пурнăçа лайăхлатассишĕн пĕрле пĕр тĕллевлĕн ĕçлесчĕ.

Пурне те сире Çĕнĕ 2011 çул тата çывхарса килекен Христос çуралнă кун ячĕпе саламлатăп. Çемйĕрсенче яланах килĕшӳпе тулли пурнăç хуçалантăр. Ĕçĕр ăнсах пытăр. Сывлăхăр çирĕп, кун-çулăр вăрăм пултăр. Телей çути сирĕн тĕлте яланах йăл-йăл çиçтĕр. Ачăрсен пурнăç çулĕ уçăлсах пытăр. Турри инкек-синкеке сирсе пытăр. Ĕмĕтленнĕ ĕмĕтĕрсем çитсе пыччăр.

**Ю.А. ИВАНОВ,**
**район администрацийĕн пуçлăхĕ.**

## 2011 çул ӳсĕмлĕрех пултăр

Ял хуçалăхĕ пĕлтĕр çут çанталăк кăларса тăратнă пысăк йывăрлăхсене чăтса ирттерчĕ. Çакăнпа пĕрлех шăрăх çу кунĕсем эпир ĕçлеме пултарнине те уçăмлăн кăтартса пачĕ. Апла иксĕлмен-ха пирте вăй-хăват! Районти ял хуçалăх производство кооперативĕсемпе ытти харпăрлăх формиллĕ хуçалăхсем, хресчен (фермер) хуçалăхĕсемпе килти хушма хуçалăхсене ертсе пыракансем йывăрлăхсем умĕнче пуç усмарĕç. Ял хуçалăх культурисем туса илесси çине тимлĕх уйăрнипе пĕрлех общеcтвăлла выльăх-чĕрлĕхе упраса хăварасси те уксахламарĕ. Выльăх-чĕрлĕхе хĕл каçарма апат янтăласси, çак ĕçре патшалăх пулăшăвĕпе пĕлсе усă курасси те ял хуçалăх ĕçченĕсен тĕп вырăнта пулчĕ. Ку экзамена та вĕсем тытрĕç. Халĕ перекетлĕ пуласси – умра тăракан тĕп тĕллев. Çакăнта та ĕçсем хăй еккипе каймасса шанатăп.

Май килнипе усă курса районта пурăнакансене, Муркаш ен аталанăвĕшĕн вăй хуракансене, ял хуçалăхĕнче ĕçлесе тивĕçлĕ канăва тухнисене, ял малашлăхне шанакан çамрăксене Çĕнĕ 2011 çул ячĕпе саламлатăп. Пурне те телей, сывлăх, ырă шанчăк, ӳсĕм çине ӳсĕм сунатăп.

Ильич яч. хис. хуçалăха ертсе пынă май салам сăмахĕсем тăван хуçалăх ĕçченĕсемшĕн те пултăр. Эсир çанă тавăрса ĕçленипе эпир кăçал мĕн акни-лартнине вăхăтра пуçтарса кĕртрĕмĕр, пур условисемпе те туллин усă курса хĕле тĕплĕ хатĕрлентĕмĕр. Тавах сире пĕрлешӳллĕ ĕçре пĕрле пулнишĕн. Уйрăммăн илсен пĕлтĕрхи çур акире тимлĕ ĕçленĕ Н. Петров, А. Васильев, И. Порфирьев, А. Александров, Л. Макаров, А. Петров тата ытти механизаторсемпе водительсене, уйхир бригадинче вăй хуракансене, вырмара тăрăшулăх кăтартнă Ю. Егоровпа В. Аврамов комбайнерсене, кĕр акинче ыттисемшĕн тĕслĕх пулса 265 гектар акса хăварнă И. Порфирьевпа А. Павлов трактористсене тав сăмахĕ калатăп. Уй-хир ĕçченĕсен тăрăшулăхне ферма ĕçченĕсем малалла аталантараççĕ. Вĕсем ку таранччен вăй хунине ырласа хĕл каçа та хăйсен ĕç кăтартăвĕсене ӳстерессе шанатăп.

Пурне те – Çĕнĕ çул ячĕпе!

**И. НИКОЛАЕВ,**
**район пуçлăхĕ, Ильич яч. хис. ял хуçалăх производство кооперативĕн ертӳçи.**

## Çĕнĕ çулта та пĕр тĕллевлĕн ĕçлер

***Кашни çулталăк мĕнпе те пулин пирĕн асра юлать. 2010 çул та акă сисĕнмесĕрех иртсе кайрĕ. Йăлана кĕнĕ тăрăх çак вăхăтра çулталăк тăршшĕпе мĕн тунине пĕтĕмлететпĕр, ума çĕнĕ тĕллевсем лартатпăр. Мĕнлерех шухăш-кăмăлпа ăсататпăр иртсе пыракан 2010 çула тата мĕнлерех тĕллевсем палăртатпăр çĕнĕ 2011 çул валли? Çакăн çинчен каласа пама ыйтрăм та эпĕ район администрацийĕн пуçлăхĕнчен Ю.А. ИВАНОВРАН.***

**– Муркаш районĕ – ял хуçалăх районĕ. Çавăнпа та калаçăва çак отрасльтен пуçлани вырăнлă пулĕ. Мĕнлерех кăтартусемпе кĕтсе илеççĕ ял хуçалăхĕнче ĕçлекенсем çĕнĕ 2011 çула?**

– 2010 çул çăмăл пулчĕ тесе калас килмест. Уйрăмах ял хуçалăхĕнче вăй хуракансемшĕн. Çав тери шăрăх çанталăк ял ĕçченне мĕн палăртнине пурнăçлас ĕçре пысăк чăрмав кӳчĕ. Пĕтĕмпе ял хуçалăх продукцине кăçалхи 11 уйăхра килти хушма хуçалăхсемпе пĕрле 1427,0 млн. тенкĕлĕх туса илтĕмĕр. Ку вăл 2009 çулхи çак вăхăтри кăтартупа танлаштарсан 102,6 процент пулать.

Шел пулин те, республикăри ытти районсем пекех, эпир те ӳсен-тăран продукцийĕн тухăçĕпе мухтанма пултараймастпăр. Иртнĕ çуллахи пек çанталăк шăрăх пулнине ваттисем те астумаççĕ. Тырă 8900 тонна кăна туса илтĕмĕр. Çĕр улми те малтанхи çулхисенчен чылай сахал тухрĕ – пурĕ 12020 тонна. Тухăç пысăках пулаймарĕ: тыр-пул пĕр гектартан 10,7 центнер, çĕр улми 56,5 центнер çеç тухрĕ. Апла пулин те çĕр ĕçне чунтан парăннă механизаторсене ятранах асăнас килет, В.В. Ердуков («Герой»), С.В. Наумов («Восток»), Б.Н. Никитин (Чкалов яч. хис.), Р.В. Кузнецов (Суворов яч. хис), Г.В. Степанов («Ударник») вырмара хастар пулчĕç.

Выльăх апатне те кирлĕ чухлĕ хатĕрлеме май пулмарĕ. Çакă выльăх-чĕрлĕх продуктивлăхĕ çине те витĕм кӳчĕ. Октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне ăна пурĕ кашни условнăй выльăх пуçне 17,1 центнер апат единици хатĕрленĕ. Ку ыйтупа ял хуçалăх предприятийĕсем халĕ те ĕçлеççĕ: ытти регионсенчен выльăх апатне кӳрсе килессипе тимлеççĕ. Уйрăмах ку енĕпе «Ударник», «Свобода», Ильич яч. хис. хуçалăхсем, «Муркашри чăх-чĕп фабрики» акционерсен уçă обществи тата ыттисем нумай тăрăшаççĕ.

Сĕт туса илесси вара пур йышши хуçалăхсенче те иртнĕ çулхи çак вăхăтри шайра. 11 уйăхра кашни ĕнерен вăтамран 3949 килограмм сĕт суса илнĕ. Ку вăл малтанхи çулхинчен 3 процент нумайрах пулать. Суворов яч. хис. (В.С. Андреев), Ильич яч. хис. (И.В. Николаев), «Свобода» (В.К. Ананьев), «Оринино» (Ю.Н. Шишокин), «Герой» (Р.Н. Тимофеев), «Восток» (М.Н. Шишокин) хуçалăхсем сĕт районти вăтам кăтартуран ытларах туса илчĕç. Ф.Ю. Антонова, Н.Е.Журавлева (Суворов яч. хис.), В.Г. Трофимова, З.С. Андреева («Ударник») кашни ĕнерен 6 пин килограмм ытла сĕт суса илчĕç.

**(Вĕçĕ. 2, 3, 4 стр.).**

## Çĕнĕ çул уявĕн кунĕсенче

***Çĕнĕ 2011 çула халалласа районта ачасем, шкулсенче вĕренекенсем тата аслисем валли тĕрлĕ мероприятисем сахал мар иртеççĕ. Акă вĕсенчен хăшĕсем.***

Декабрĕн 31 – январĕн 1-мĕшĕсенче Муркашра «В Новогоднюю ночь» ятпа урамри уяв мероприятине ирттереççĕ.

Январĕн 1-мĕшĕнче «Сывлăх» физкультурăпа спорт комплексĕнче «Новый год во дворе» представлени пулать.

Январĕн 5-мĕшĕнче унтах çемье командисем хушшинче шывра ишессипе «Папа, мама, я – спортивная семья» ăмăрту пулĕ.

Январĕн 5–6-мĕшĕсенче пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан шкулсенче вĕренекенсем шашкăлла тата шахматла выляссипе турнирта вăй виçеççĕ.

Январĕн 6–7-мĕшĕсенче хоккейла выляссипе Сурхури турнирне ирттерме пăхнă.

Январĕн 6, 7, 13-мĕшĕсенче культура учрежденийĕсенче Сурхури каçĕсем иртĕç, кивĕ Çĕнĕ çула уявлĕç.

Январĕн 6-мĕшĕнче районти историпе краеведени музейĕнче «Новогодние праздничные обряды» ятпа пĕлӳпе вăйă программине йĕркелеççĕ.

Январĕн 13-мĕшĕнче ватă çынсемпе инвалидсен вăхăтлăх пурăнмалли Мăн Сĕнтĕрти уйрăмĕнче Сурхури уявне паллă тăваççĕ тата кивĕ Çĕнĕ çула кĕтсе илеççĕ.

# Хаксем «çыртаççĕ»

## «Çавра сĕтел»

***Иртнĕ эрнере, декабрĕн 24-мĕшĕнче, район администрацийĕнче «Çавра сĕтел» иртрĕ. Ăна район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ, капиталлă строительство, архитектура тата пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх управленийĕн ертӳçи В.Г. Никитин уçрĕ тата ертсе пычĕ. Уçă калаçăва «Пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăхăн ертсе пыракан компанийĕ» чикĕллĕ яваплăхлă общество директорĕ Н.В. Любимов, Муркашри тата Мăн Сĕнтĕрти пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх предприятийĕсен директорĕсем С.Н. Тимофеев тата Ю.Л. Петров, район центрĕнчи нумай хваттерлĕ çуртсенче пурăнакансем хутшăнчĕç.***

Мероприяти теми çĕнĕлĕх мар. Ку вăл коммуналлă услугăсен хакĕсем ӳссе пыни. Çитменнине ку ыйту тĕлĕшпе «вут хуракан» передачăсем юлашки вăхăтра телевиденипе те пулкаларĕç. «ЖКХ. История Всероссийского обмана» передача пирки те çавнах каламалла. Çавна май В.Г. Никитин хаксем мĕн пирки ӳснине уçăмлăн ăнлантарса пачĕ. Н.В. Любимов, С.Н.Тимофеев, Ю.Л. Петров та хăйсен сăмахĕсенче çав ыйтусем çинчех чарăнса тăчĕç, «çавра сĕтеле» хутшăнакансен ыйтăвĕсем çине хуравларĕç.

Хаксем чăннипех те ӳсеççĕ. Акă юлашки 6–7 çул каяллахипе танлаштарсан ăшăпа тивĕçтерессин хакĕ 212,9 процентпа танлашать. Анчах та ĕç укçи пирки çакна каламалла çук. Хваттерсенче пурăнакансене те ăнланма пулать. Анчах та газ тата электроэнерги хакĕсене патшалăх йĕркелесе пырать. Вĕсемсĕр вара ăшăпа тивĕçтерейместĕн. Вĕсен тарифĕсем ӳсеççĕ пулсан ирĕксĕрех ăшă хакĕ те хăпарать. Танлаштарма: асăннă тапхăрта вара электроэнерги хакĕ 283,3 процент, газ хакĕ 266,4 процент ӳснĕ. Ăшăпа тивĕçтерессин шайĕнче 70–75 процент шăпах ĕнтĕ электроэнергипе газ йышăнаççĕ.

Пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх предприятийĕсен усă курнă электроэнергишĕн те, газшăн та уйрăм çынсем тӳленинчен пысăкрах тарифпа тӳлеме тивет. Çавăнпах ăшăпа тивĕçтересси ку предприятисемшĕн тăкаклă.

Тепĕр ыйту – хваттерсене харпăр хăй хутса ăшăтмалла майлаштарасси. Анчах кунта та ыйтусемсĕр мар. Районĕпе хваттер хуçисенчен çуррине яхăн çак мелпе усă курать те ĕнтĕ. Ыттисем вара... Пĕрне укçа-тенкĕ ыйтăвĕ шухăшлаттарать, тепри унччехи пекех тĕп котельнăйран ăшă илсе тăрасшăн. Нумай хваттерлĕ çуртра пурăнакансем пурте пĕр шухăшлă пулса газ хуранĕсене хăйсен хваттерĕсенче вырнаçтарма килĕшмесĕр вара ку ĕçсене пуçăнма май çук.

Хваттерсене приватизацилес, çӳп-çап тата йăла каяшĕсене турттарса тухас, район центрĕнче харпăр хăйсен автомашинисене урамсенче тата çуртсен картишĕсенче лартма чарас ыйтусене те çĕклекенсем пулчĕç. Акă нумай хваттерлĕ çуртсенче пурăнакансем йăла каяшĕсемшĕн уйăхсерен укçа тӳлеççĕ, контейнерсене вара кам кăна килсе çӳп-çап сиплесе хăвармасть-ши? Çакна чи малтанах уйрăм çурт-йĕр хуçисем пирки каламалла. Апла пулин те ырă еннелле улшăнусем куç кĕрет. Ял тăрăхĕсен территорийĕсенчи ялсенчен те йăла каяшĕсене полигона турттарса тăрасси йĕркене кĕрсе пырать.

Теприсене тата çӳп-çап турттарнăшăн хваттерте миçе çын пурăннине пăхса мар, хваттер лаптăкне кура тӳлев виçине палăртни тĕрĕс мар пек туйăнать. Анчах та саккунпа çапла палăртнă пулсан ку тĕлĕшпе нимех те улăштарма май çук.

Н.В. Любимов палăртнă тăрăх хваттер укçи тӳлессипе парăмлисем сахал мар. Вăрттăнлăх мар, судлашма та тивет. Апла пулин те палăрăмлă улшăнусем сисĕнсех каймаççĕ.

Яланхи пекех шыв ыйтăвĕ те кăсăклисен шутĕнче. Уйрăмах кăçалхи шăрăх та типĕ çанталăкра вăл хытах сисĕнчĕ. Апла пулин те ку ыйтăва та май пур таран япăх мар татса панине палăртмалла. Нумай çĕрте пĕрлешӳллĕ хуçалăхсем саланса кайнă май шыв уçлакан башньăсем хуçасăр пулса юлчĕç. Ку енĕпе Сĕнтĕр зонине ырă енчен палăртмалла. Кунта башньăсене пăхса тăрассине Сĕнтĕрти пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх предприятийĕ хăйĕн çине илнĕ. Малтанхи вăхăтра йывăртарах пулнă пулин те ĕç майĕпен майлашăнса пырать. Кунпа пĕрлех шывпа çыхăннă тепĕр ыйту вăл – малашне шывпа мĕн чухлĕ усă курнине палăртма счетчиксем вырнаçтарасси. Унсăр та май çук.

Çурт-йĕр хуçисен юлташлăхĕсене (ТСЖ) йĕркелесси пирки те сăмах пуçаракансем пулчĕç. «Надежда», «Юг», «Шанчăк» юлташлăхсем пур та ĕнтĕ. Анчах та манмалла мар. Кашни 15–20 хваттерлĕ çурт валли юлташлăх йĕркеленинчен усси пулас çук. Мĕншĕн тесен хваттер хуçисенчен пуçтаракан укçа сумми тĕрлĕ ĕçсем пурнăçлама мар, кирлĕ штата тытса тăма та çитес çук. Мĕншĕн тесен юлташлăх ертӳçи те, бухгалтер та кирлĕ, шалуне те вĕсене тӳлемелле, банкра счет та пулмалла т. ыт. те.

Юлашкинчен çавна каласа хăварасшăн. «Çавра сĕтел» хушшинчи кун пек уçă та тӳрĕ калаçусем чăннипех те кирлĕ. Пуриншĕн те вăл усăллă иртрĕ. Чылайăшĕ хăйсене канăç паман ыйтусем çине конкретлă хурав илме пултарчĕ.

**В. ШАПОШНИКОВ.**

## Саламлатпăр



Пирĕн юратнă та хаклă çыннăмăра – Муркашра пурăнакан **Алевтина Юрьевна СЛЕПНЕВĂНА** 50 çул тултарнă ятпа чун-чĕререн ăшшăн саламлатпăр. Пурнăç çулĕпе пĕр тикĕс утма çăл куç пек тапса тăракан вăй-хал, юман пек çирĕп сывлăх, вăрăм кун-çул сунатпăр. Кил-йышра яланах килĕшӳпе тату пурнăç хуçалантăр. Кĕрекӳ тăванусемпе тулли пултăр, чир-чĕр санран пăрăнса çӳретĕр. Мĕн ĕмĕтленни яланах пурнăçлантăр. Эпир сана юрататпăр.

**Ырă сунса: мăшăрĕ, ывăлĕсем, кинĕ, мăнукĕсем.**



Пирĕн юратнă çыннăмăра – Шаптак Муркаш ялĕнче пурăнакан **Фаина Арефьевна ОСИПОВĂНА** сумлă юбилей ячĕпе чун-чĕререн ăшшăн саламлатпăр. Пурнăçра сана мĕн пур ыррине кăна сунатпăр. Эсĕ ырă кăмăлупа, ĕçченлĕхӳпе, тирпейлĕхӳпе палăрса тăратăн. Сана эпир юрататпăр, ырлăх-сывлăх, телей сунатпăр. Мăшăру, ачусем, çывăх тăванусем сана яланах савăнăçпа телей, савăк кăмăл парнелеччĕр. Сывлăху çирĕп, кун-çулу вăрăм пултăр, сĕтелӳ çăкăр-тăвартан ан татăлтăр, кĕрекӳ тăвансемпе, юлташсемпе яланах пуян пултăр.

**Пысăк салампа: тăванĕсем.**

Хаклă та юратнă çыннăмăрсене – Чамăш ялĕнче пурăнакан **Иванпа Василий Игнатьевич ВЕРШКОВ** йĕкĕрешсене çуралнă кун ячĕпе ăшшăн саламлатпăр. Иван Игнатьевич 1974 çултанпа водитель пулса ĕçлет, Василий Игнатьевич Шупашкарти агрегат заводĕнче 1972 çултанпа ĕçлет. Эпир сире çирĕп сывлăх, çемьере килĕшӳ, иксĕлми телей сунатпăр.





Чи илемлĕ сăмахсем калатпăр
Чĕререн сире сума суса.
Ырлăх-сывлăх, телей çеç сунатпăр,
Пурăнсамăр ĕмĕр савăнса.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕсем, ачисем, мăнукĕсем, Вершковсен йышлă тăванĕсем.**



Хаклăран та хаклă çыннăмăра, аннене, хунямана – Çурлатри ялĕнче пурăнакан **Римма Александровна ТОДИНОВĂНА** паян çуралнă кунĕ ячĕпе саламлатпăр. Ĕмĕрӳ сан шурă пир пек вăрăм пултăр, сывлăху юман пек çирĕп пултăр, сан питӳ шурă хурăн пек хитре пултăр. Сĕтелӳ çинчен çăкăр-тăвар ан татăлтăр, кĕрекӳ тăвансемпе, ял-йышпа тулли пултăр.

**Саламлаканĕсем: ывăлĕпе кинĕ, хĕрĕпе кĕрӳшĕ, мăнукĕсем, Соколовсен çемйи, мĕн пур тăванĕсем.**



Хамăрăн юратнă мăшăра, аттене, асаттене, хаклăран та хаклă çыннăмăра – Çеçмер ялĕнче пурăнакан **Александр Христофорович КОЗЛОВА** январĕн 7-мĕшĕнче 75 тултарнă ятпа чун-чĕререн тата пур кăмăлтан саламлатпăр. Эпир ăна мĕн пур ыррине кăна сунатпăр. Телейлĕ, сывлăхлă пул, татах нумай-нумай çул пире савăнтарса пурăн.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, ывăлĕсемпе кинĕсем, хĕрĕпе кĕрĕвĕ, мăнукĕсем, прамăнукĕсем, хăти-тăхлачисем тата тăванĕсем.**

# Çĕнĕ çулта та пĕр тĕллевлĕн ĕçлер

**(Малалли. Пуçл. 1 стр.).**

Аш туса илесси кăçалхи 11 уйăхра 2009 çулхи çак вăхăтринчен кăшт – 5 процент чакрĕ пулин те халь çеç асăннă сĕт туса илессипе ăнăçлă ĕçлекен хуçалăхсем тата «Ударник» (ертӳçи – П.П. Давыдов) лайăх ĕçлеççĕ.

Чăхсен йышĕ иртнĕ çулхи çак вăхăтринчен 32 процент чухлĕ ӳсрĕ. 11 уйăхра иртнĕ çулхи çак вăхăтринчен 3 процент ытларах – 60,3 млн. штук çăмарта туса илнĕ е кашни çăмарта тăвакан чăх пуçне – 302 штук.

2010 çулта малтан усă курман 967 гектар çĕр çинче ял хуçалăх культурисене акса хăвартăмăр. Уйрăмах ку енĕпе «ВаСем» чикĕллĕ яваплăхлă общество, «Свобода» хуçалăх, «Горбунов» тата «Яргеев» хресчен (фермер) хуçалăхĕсем ăнăçлă ĕçленине палăртмалла.

Пĕтĕмпе вара кĕрхи культурăсене 6610 гектар çинче акса хăвартăмăр. Кĕрхи çĕртмене те 6 пин гектар ытларах лаптăк çинче туса ирттернĕ. Çурхи культурăсен вăрлăхне те çителĕклех хывса хăвартăмăр. Халĕ ăна кондицие çитересссипе тимлеççĕ районта. Кăçал хуçалăхсене аталантарма тĕрлĕ шайри бюджетран патшалăх пулăшăвне районти хуçалăхсем 81 млн. тенкĕлĕх илчĕç.

Килти хушма хуçалăха аталантарма 2010 çулта районти 388 çемье 53 млн. та 466 пин тенкĕлĕх патшалăх паракан çăмăллатнă кредита илнĕ.

Ял хуçалăхĕнче çитес çул туса ирттермелли ĕçсенчен çаксене асăнса хăварас килет. «ВаСем» чикĕллĕ яваплăхлă общество 600 пуç ĕне вырнаçмалăх ферма тăвасшăн. «Фаворит» чикĕллĕ яваплăхлă общество килти кайăк-кĕшĕке ĕрчетме кирлĕ симĕс апат хатĕрлес ĕçе пуçăнасшăн. «Путь Ильича» (малтан Ленин яч. хис. хуç. пулнă) хуçалăхра 1 пин пуç măйракаллă шултра выльăх усрама ферма тăвасшăн.

**– Промышленность предприятийĕсем мĕнле çĕнтерсе пыраççĕ йывăрлăхсене?**

– Кăçалхи 11 уйăхра вĕсем пурĕ 1020,9 млн. тенкĕлĕх продукци кăларса реализацилерĕç. Ку вăл иртнĕ çулхи çак вăхăтринчен 67 процент нумайрах. Уйрăмах «Сеспель» акционерсен хупă обществи (ертӳçи – В.А. Бакшаев) кризис кăларса тăратнă йывăрлăхсене çĕнтерсе кăтартăвне 2,88 хут ӳстерме пултарчĕ. Асăннă предприятире ĕçлекен В.И. Шолков мастера, В.А. Мостов бригадира, Л.Н. Апроськина маляра уйрăмах ырăпа асăнас килет. Çавăн пекех «Муркашри кирпĕч завочĕ» акционерсен уçă обществи (ертӳçĕн çумĕ – Ю.И. Петров) те иртнĕ çулхи çак вăхăтринчен 2,7 процент чухлĕ ытларах продукци кăларма пултарчĕ. Кунта вăй хуракан В.В. Григорьев водитель, В.Н. Христофорова сортировщица, Н.П. Нодыков наладчик пултарулăхпа палăраççĕ. Çавăн пекех «Сундырь-Хлеб» тата «Моргауши-Хлеб» чикĕллĕ яваплăхлă обществăсем те хăйсен кăтартăвне пĕлтĕрхинчен 3-4 процент чухлĕ ӳстерме пултарчĕç. «Сундырь-Хлеб» чикĕллĕ яваплăхлă общество нумаях пулмасть 45 çул тултарчĕ. 20 çул хушши ăна Л.Г. Ильгечкин ăнăçлă ертсе пырать. Çакăнта вăй хуракан С.А. Елумова çăкăр пĕçерекене, А.И. Блинова пĕремĕк пĕçерекене, Л.Г. Пинарина мармелад тăвакана, «Моргауши –Хлеб» чикĕллĕ яваплăхлă обществăри Л.В. Звонкова технолога та пултаруллă ĕçшĕн тав тăвас килет.

**– Юрий Александрович, магазинсенче тавар епле кайнинчен те тӳрремĕнех курăнать халăхăн пурнăç шайĕ. Ку енĕпе мĕн калама пултаратăр?**

– Ваккăн сутмалли таварçаврăнăш планне 2010 çулхи 11 уйăхра пĕтĕмпе 610,5 миллион тенкĕлĕх пурнăçланă е 2009 çулхинчен 18 процент ытларах. Обществăлла апатлану предприятийĕсем те пĕлтĕрхинчен кăтартуллăрах ĕçленине çак цифрăсем те кăтартса параççĕ. Иртнĕ çулхи çак вăхăтринчен 9,7 процент ытларах – 60,9 млн. тенкĕлĕх пурнăçланă вĕсем хăйсен ĕçне. Муркаш тата Мăн Сĕнтĕр райповĕсене нумай çул ĕнтĕ Б.В. Андреевпа Л.П. Майкова ăнăçлă ертсе пыраççĕ.

Районта пĕчĕк тата вăтам бизнеса аталанма та майсем туса парассипе тимлерĕмĕр. Çак тĕллевпе 600 пин тенкĕлĕх грант выляса илтĕмĕр. Ку суммăпа 5 çынна хăйсен ĕçне уçма пулăшма усă курнă.

2010 çулта пурĕ уйрăм çынсен 13 магазинĕ тата 1 парикмахерски уçăлчĕ. Çапла майпа ку сферăра тата 27 ĕç вырăнĕ тупăнчĕ.

Çитес çул валли те ку енĕпе тĕллевсем пысăк. Москакассинче ял хуçалăх таварĕсем сутмалли пасар тумалла. Çавăн пекех Муркашри бизнес-инкубатора туса пĕтермелле.

Халăха тӳлевлĕ пулăшу парасси те 6,1 процент чухлĕ хăпарчĕ, 65,0 млн. тенкĕпе танлашрĕ.

**– Çулсеренех районта çĕнĕ çуртсем çĕкленеççĕ. Çул-йĕр тăвассипе та сахал мар ĕçсем туса ирттереççĕ. Ку отрасль ĕçне епле хак панă пулăттăр?**

– Çул-йĕр тăвассипе çав тери пысăк ĕçсемех тăвайманăмăр пулин те, 1,382 км «Автанкасси – Козьмодемьянск – Патаккасси» çула, 0,375 км «Волга – Ивановка» çула турăмăр. Çулсем тытса тăрас ыйтăва та куçран пĕрре те вĕçертмен: 201 километр тăршшĕ муниципаллă çулсене тытса тăма 10 млн. та 236 пин тенкĕ, ялсем хушшинчи 362 километр ытларах çула тытса тăма 6 млн. та 362 пин тенкĕ уйăрнă, çак суммăпа пĕтĕмпех усă курнă. Ку енĕпе уйрăмах ДЭП-146 (ертӳçи – В.А. Павлов, çумĕ – Н.Е. Николаев) ĕçченĕсем тăрăшуллине палăртмалла.

Халăха çурт-йĕр тума пулăшас ыйтăва та районта кая хăварман. Кăçал федераллă программăпа ялта пурăнакан тата ĕçлекен 14 çамрăк специалиста çурт-йĕр тума (туянма) 7 млн. та 616 пин тенкĕлĕх,15 çынна çурт лартма е туянма 6 млн. та 383 пин тенкĕлĕх пулăшнă.

Республика программипе килĕшӳллĕн 2 çамрăк çемьене 947 пин тенкĕлĕх пулăшнă.

2010 çулта Муркашра 40 хваттерлĕ çурт туса пĕтертĕмĕр. «МСО «Моргаушское» акционерсен хупă обществин (ертӳçи – В.Н. Семенов) строителĕсем тăрăшса ĕçлерĕç. Халĕ вĕсем Муркашра 3 подъездлă 48 хваттерлĕ çуртăн 1-мĕш хутне купалаççĕ. Çулталăк вĕçлениччен уйрăм çынсен çуртне тата нумай хваттерлĕ çуртсене тунă лаптăк пĕтĕмпе 27470 тăв. метрпа танлашмалла.

Çавăн пекех 2010 çулта Чăваш Республикин «Çурт-йĕр хутшăнăвĕсене йĕркелесси» саккунĕпе килĕшӳллĕн Оринин ял тăрăхĕнчи тăлăх ачана çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатма республика бюджетĕнчен 742 пин тенкĕлĕх пулăшу панă.

2010 çулта «Граждансене кивĕ авариллĕ çурт-йĕр фондĕнчен кăларасси» программăна пурнăçа кĕртсе Муркашра, Москакассинче, Мăн Сĕнтĕрте 42 млн. та 945 пин тенкĕлĕх ĕç тунă. Пĕтĕмпе 142 çын авариллĕ лару-тăруллă çуртран тухать.

Çулталăк тăршшĕпех нумай хваттерлĕ çуртсене юсас ыйтăва та сахал мар тимлĕх уйăртăмăр. Çурт çивиттийĕсене, шыв пăрăхĕсене, канализаци системисене, электрохуçалăха тĕплĕн юсама 1 млн. та 88 пин тенке яхăн укçа-тенкĕпе усă куртăмăр. Тĕплĕ юсав ĕçĕсене пурĕ 18 çуртра пурнăçланă.

Ялсене компактлă комплекслă аталантарас программăна 2010 çулта вара Çатракасси тата Йӳçкасси ял тăрăхĕсем хутшăнчĕç. Çапла майпа çак ял тăрăхĕсенчи культура тата социаллă объекчĕсене тĕпрен юсама май килчĕ. Çак ĕçсене пурнăçлама 9 млн. та 434 пин тенкĕ тăкакларăмăр.

2010 çулта çĕнĕ 52 урама электрификацилеме проектсем хатĕрлерĕмĕр, çав шутран 21 урамра çак ĕçе туса пĕтеретпĕр. Пĕтĕмпе 18 млн. та 842 пин тенкĕ тухса каять. Ку ĕçе çитес çул малалла тăсмалла.

Тепĕр пысăк утăм вăл – çӳп-çап тăкмалли полигона тума пуçлани. Унăн пĕрремĕш черетне хута яма пултартăмăр. Çакна валли 25 млн. та 652 пин тенкĕ кирлĕ пулчĕ. Полигонăн пĕрремĕш черетне 2010 çулхи июнĕн 10-мĕшĕнче хута ятăмăр. Çитес çулта полигона малалла тумалла.

Тавралăха тирпей-илем кĕртес енĕпе те çине тăрсах ĕçлерĕмĕр. Çырма-çатрасенче, çул хĕррисенче, тĕрлĕ вырăнсенче пурĕ 8 гектар çинче 30 360 йывăç лартса хăвартăмăр. Парксемпе аллейăсем, садсем чĕртсе хăвартăмăр, малтан лартнисене çĕнетрĕмĕр. 48 пĕве, 69 çăл тасатрăмăр. 2011 çулта ял тăрăхĕсенчи шыв пăрăхĕсене ял тăрăхĕсен балансĕ çине куçармалла.

**– Районти ытти отрасльсенче мĕнле улшăнусем пулса иртрĕç?**

2010 çул вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен суйлавĕ иртрĕ. Депутатсен районти Пухăвĕн 25 депутатне, ял тăрăхĕсен 181 депутатне суйларăмăр. Района ертсе пырас ĕçре те улшăнусем пулса иртрĕç: район тата район администрацийĕн пуçлăхĕсем хăйсен тивĕçĕсене пурнăçлама пуçларĕç. Ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсене (Орининсăр пуçне) çĕнĕрен суйларăмăр.

**(Малалли 3, 4 стр.).**

Пирĕн пата çыраççĕ

# Малашлăха шанса ĕçлеççĕ

Пирĕн тăрăхри çĕр ĕçĕ çут çанталăк пулăмĕсемпе тўрремĕнех çыхăннă. Çавăнпа та кăçалхи шăрăх çанталăк та çĕр ĕçченĕ умне нумай йывăрлăх кăларса тăратрĕ. Анчах малашлăха шанчăклă пăхса ĕçлекен Ильич яч. хис. хуçалăх ĕçченĕсен умри йывăрлăхсем умĕнче алă усмарĕç. Кунта хуçалăх ĕçченĕсен тăрăшулăхĕпе ял хуçалăх производство кооперативĕн ертўçин Игорь Васильевич Николаевăн ертсе пыма пултарăслăхĕ те яр уççăн курăнчĕç.

Пытармасăр каласан Ильич яч. хис. хуçалăх районта вăйлă аталанса, çĕнĕлĕхсем кĕртсех пыракан хуçалăх. Уйкас Янасалсем 1400 гектар çинче тĕрлĕ тыр-пул акса ўстереççĕ. 752 пуç майракаллă шултра выльăхсен кĕтĕвĕнче 241 пуç сумалли ĕнесем. Хуçалăхра юлашки çулсенче выльăхсен йышне пĕр пуç та чакармаççĕ.

Хĕле хатĕрленессине те кăçал кунта малти вырăнта тытса пычĕç. Пĕрлехи тăрăшулăхпа Уйкас Янасалти ĕне витине тĕпрен юсаса çĕнетрĕç. Кунта хуçалăхри механизаторсен бригади ĕçлерĕ. Хуçалăхри строительсен бригади тăрăшнипе тырă аласа-типĕтсе хатĕрлемелли комплекс вырнаçтарнă.

Сĕте сивĕтессине лайăх йĕркеленĕрен Муркашри сĕт заводне пысăк пахалăхлă сĕт ăсанать. Ку вара – кулленхи укçа. Сăвăм пысăккинче фермăра ĕçлекен дояркăсен кашнин тўпи пур. Вĕсем: Л. Петрова, Р. Терентьева, Г. Федорова, С. Федорова, Ю. Иванова, З. Семенова.

Пĕрлехи ăнăçулăх пурте пĕрле пулнинчен килет. Акă паян выльăх пăтĕнче ĕçлекенсен тăрăшулăхне ўстерессипе механизаторсенчен йĕркеленĕ строительсен бригади хĕл сиввине пăхмасăр сыснасем самăртмалли витене юсассипе тимлет.

Паян тухăçлă ĕçлекен хуçалăх ыранхи пирки те шутлать. Хуçалăх çитес çур аки валли çителĕклĕ вăрлăх хывса хăварнă. Уй-хирте пĕтĕм лаптăка çĕртме сухи тунă. Хуçалăхăн пур уйрăмĕсенче те йĕркелĕх хуçаланнинче И. Николаев ертўçĕн тўпи пысăккине хуçалăхра ĕçлекен кашни ĕçчен ăнланать. Ăнланать те çĕнме татах ўстерме хăй вăй çитерні чухлĕ тўпе хывать.

**П. ИВАНОВСКИЙ.**
Кĕртекасси ялĕ.

# Пурнăçлани лайăх та, тумалли те нумай



Аталану çулĕпе пыракансем патĕнче

***Пурнăç пĕр вырăнта тăманни, унăн аталанăвĕ çĕнĕлĕхсемпе пуянланса пыни тата çынсен пурнăç шайĕ пĕрлехи тăрăшулăхпа тепĕр картлашка çўлелле хăпарни хамăрăн социаллă пурнăçпа экономика çине татах та тимлĕрех пăхма ыйтать. Çакă пирĕн районта иккĕмĕш вырăнта тăманнине Муркаш Енри промышленность предприятийĕсен иртнĕ çулхи социаллă-экономика аталанăвĕн кăтартăвĕсем уçăмлăн çирĕплетсе параççĕ. Аталану районăн 2006–2010 çулсем валли хатĕрленĕ социаллă-экономика аталанăвĕн Программипе тата районти депутатсен Пухăвĕн депутачĕсем ака уйăхĕн 29-мĕшĕнче йышăнса хăварнă «Районăн 2010–2012 çулсем валли хатĕрленĕ социаллă-экономика аталанăвĕн Программипе» килĕшўллĕн пулса пычĕ. Пытарма çук, çакă иртнĕ çул район аталанăвĕпе кунçулĕн кашни утăмĕнче, кашни отраслĕнче палăрчĕ.***

***Çĕнĕ çул умĕн асăннă программа пурнăçланнипе тата предприяти кризислă тапхăрта епле аталаннипе «Муркашри кирпĕч завочĕ» хупă акционерлă обществăн тĕп бухгалтерĕпе Раиса Александровна АНТОНОВĂПА тĕл пулса каласрăм.***

**– Çăмăл мар çул хыçа юлчĕ. Мĕнпе асра пулĕ вăл?**

– 2010 çул пĕтĕм тĕнчери экономика кризисĕ предприяти-организацисене хытах «силлени-тăлланипе» кашниншĕнех ымайлăха асра юлĕ. Çак йывăрлăхсем пире те айккинче хăвармарĕç. Апла пулин те эпир хамăрăн производствăна сулăнкăна ямарăмăр. Реализацие шайра тытса тăрассипе хаксене кăшт йўнетнипе туса илнĕ укçа-тенкĕ тĕлĕшпе иртнĕ çул шайне лартăмăр пулсан та кирпĕч туса кăларасси пĕр миллион штука яхăн ўсрĕ. Ку пире савăнтарать, малашлăх пирки ĕмĕтленме çул парать.

**– Экономика кризисĕ ĕç вырăнĕсене чакарассине пырса тивмерĕ-и?**

– Темĕн те пулать пурнăçра. Эпир вара вăхăтлăх йывăрлăхсем тесе çынсене ĕçрен хăваламарăмăр. Паян пирĕн заводра 116 çын ĕçлет. Вĕсен уйăхри ĕç укçи районăн вăтам кăтартăвĕ шайĕнчех.

**– Çĕнĕ çула парăмсемсĕрех кĕтĕр пулĕ-ха?**

– Парăмсемсĕр ĕçлесси – пирĕн тĕп тĕллев. Пĕлтĕр эпир пĕтĕмпе 12 миллион тенкĕне яхăн тĕрлĕ налуксем тўлерĕмĕр. Ку енĕпе те, ĕç укçи тĕлĕшпе те пирĕн парăмсем çук. Çапла ĕçленипе пĕлтĕр продукци сутса пĕтĕмпе (хушма хаксен налукĕпе пĕрле) 42866 пин тенкĕлĕх тупăш турăмăр. Виçĕм çулхипе танлаштарсан ку сумма 1,5 миллион тенкĕ нумайрах. Ăнланатпăр, мĕн туни лайăх, анчах пурнăçламалли тата нумайрах.

**– Мĕнех, кăçал та сире ўсĕм хыççăн ўсĕм сунатăп. Ĕмĕтĕрсем пурнăçланасса, коллективри тăрăшулăх район аталанăвне пысăк тўпе хывасса, районшăн социаллă пĕлтерĕшлĕ предприяти ятне çухатмасса шанатăп.**

– Тавта пуç. Сирĕн те çаплах пултăрчĕ. Пурне те Çĕнĕ çул ячĕпе саламлатăп.

**А. БЕЛОВ калаçнă.**

Эсир пĕлесшĕнччĕ

# «Дача амнистине» çул уçă

Муркаш районĕнче 2010 çулта «дача амнистийĕпе» 713 куçман пурлăх тĕлĕшпе правасем, 395 çĕр участокне, 299 индивидуаллă пурăнмалли çуртйĕре регистрациленĕ. Дача тата сад пĕрлешĕвĕсенчи 19 дача пўрчĕ тĕлĕшпе свидетельствăсем панă.

Дача амнистийĕсем çинчен калакан саккун граждансене 2001 çулхи юпа уйăхĕн 30-мĕшĕччен килти хушма хуçалăха ертсе пыма, дача хуçалăхне тытма, пахча çимĕç туса илме, сад ĕрчетме, индивидуаллă гаражсем тума тата пурăнмалли çурт-йĕр çавăрма панă çĕр участокĕсене пырса тивет. Вĕсене харпăрлăх правине еткертен еткере куçмалла е яланлăх вăхăтсăр усă курма памалла. Анчах çĕрпе усă курма ирĕк паракан документра ирĕк тĕсне пачах кăтартманни те пулма пултарать.

Çĕр участокне çăмăллатнă йĕркепе харпăрлăха куçарассипе йывăрлăхсем çук. Патшалăх регистрацийĕн, кадастрĕн тата картографин Федераллă службăн Чăваш Республикипе ĕçлекен Управленине 100 тенкĕ госпошлина тўленин квитанцине тата çĕрпе усă курма ирĕк паракан документа тăратмалла кăна. Документ шутĕнче патшалăх влаç органĕн е вырăнти самоуправлени органĕн çĕр участокĕ пама тунă йышăнăвĕ, патшалăх акчĕ, çĕр харпăрлăхĕ тĕлĕшпе илнĕ свидетельство е гражданина çĕрпе усă курма ирĕк паракан ытти документ.

Ирĕк паракан документри йăнăшсем вара йывăрлăхсем кăларса тăратма пултараççĕ. Тĕслĕхрен, свидетельствăсене çĕр участокĕн хуçисен хушамачĕсене, ячĕсене е ашшĕ ячĕсене тĕрĕс мар çырни. Çак йăнăшсене тўрлетессипе граждансем час-часах регистраци органне пулăшу ыйтма пыраççĕ.

Кунта çакна калас килет. Патшалăх регистраци прависем паракан орган çĕрпе усă курма паракан, çавна валли документсем тăвакан орган шутланмасть. Апла пулсан унччен çырнă патшалăх акчĕсемпе свидетельствăсене тўрлетўсем кĕртме те пирĕн ирĕк çук. Ирĕк паракан документсенче тунă йăнăшсене çав документсене паракан çеç тўрлетме пултарать.

Анчах пĕчĕк ыйтусене татса пама пулать. Патшалăх акчĕсенчи орфографи йăнăшĕсене техникăлла йăнăшсене пăхмасăрах çĕр участокĕ тĕлĕшпе харпăрлăх правине патшалăх регистрацийĕ тума пулать, анчах çав документсем çумне вĕсене мĕнле хутсем çине таянса панине те тăратмалла тата вĕсенче йăнăш пулмалла мар.

Тавлашуллă ыйтусене суд пăхса тухать. Раççей Федерацийĕн Гражданла процессуаллă кодексĕн 264 статйин 2-мĕш пункчĕпе килĕшўллĕн суд ирĕк паракан документри йăнăшсем паспортра кăтартнипе тўр килменнине пăхса тухса йышăну тăвать.

Каларăм ĕнтĕ, ыйтăва татса парассипе вăл е ку йывăрлăхсем пулсан йăнăшсене суд йышăнăвĕпе кăна тўрлетме юрать. Суд йышăнăвне çĕр участокне харпăрлăха куçарса патшалăх регистрацийĕ тума документсем тăратнă чух пĕрле памалла.

**Т. ЗАХАРОВА,**
**Чăваш Республикипе ĕçлекен Росреестр управленийĕн специалисчĕ.**

# Предприяти аталанăвĕшĕн

Ĕçре хастаррисем

Хамăртан аслисем ĕç çынна илем кўрет тесе вĕрентнине Оринин ял тăрăхĕнчи Чамăш ялĕнче çуралса ўснĕ, Муркашри кирпĕч заводĕнче ĕçлекен тата кунти хваттерте пурăнакан Владислав Васильевич Ершовпа тĕл пулсан чĕре çумне илтĕм. Урăхла майĕ те çук. 5 ачаллă çемьере хăй кĕçĕнни пулнăранах-тăр Владиславăн пĕчĕккĕллех ĕçе кўлĕнме тивнĕ.

– Аттепе анне «Оринино» хуçалăх производствинче ĕмĕрĕнĕпех пире те ачаллах ĕçе хăнăхтарчĕç. Ĕçлемесĕр сĕтел хушшине ан лар! Çапла вара совет çарĕнче службăра пулнă хыççăн Муркашри кирпĕч заводĕне водитель пулса ĕçлеме вырнаçрăм та урăх ĕç вырăнĕ шырамарăм, – васкамасăр калаçать чĕрĕк ĕмĕр заводра вăй хуракан арçын.

Чĕрĕк ĕмĕр терĕм пулсан та, Владислав Васильевич кунти производствăра 20 çул ытла стропальщикра тимлет. Хăйĕн ĕçĕ предприяти аталанăвĕшĕн пулнине ăнланать вăл. Çавăнпа кулленхи ĕçре ĕç хăрушсăрлăхне тĕп вырăнта тытать. «Асăрханса ĕçленипе инкек-синкек тĕлне пулман», – терĕ калаçу çак тĕле çитсен завод администрацийĕнчен пĕрре мар Тав çырăвĕсемпе Хисеп грамотисем илме тивĕç пулнăскер.

– Çулла кунне 50-шар пин кирпĕч тиесе яратпăр. Ку вăл калама кăна çăмăл. Ăна пурнăçлама мĕн чул яваплăх кирлĕ. Пире Владислав Васильевич тăтăшах вĕрентсе пырать. Туслă коллективра вара ĕçлеме те çăмăлрах, – калаçăва хутшăнчĕ пирĕн пата пырса тухнă Н. Порфирьев.

Ĕçре пĕлў панисем В. Ершовăн 10 çынна та çитсе кайнă ĕнтĕ. Паян вĕсем кашниех хăйĕн наставникне тав сăмахĕ калаççĕ.

Муркашри «Солнышко» ача садĕнче медсестрара ĕçлекен Галина Константиновнăпа Владислав Васильевич Ершовсем пĕр ача ўстереççĕ.



**А. БЕЛОВ.**
**Автор сăн ўкерчĕкĕ.**

Сăмах – çĕр ĕçченне

# Кĕнекешĕн пысăк тав

***Автор пирки. Шурчара пурăнакан Светлана Семеновна Тимофеева хăйĕн ĕç ĕмĕрне «Герой» хуçалăх аталанăвĕшĕн ĕçлесе ирттерчĕ. Нумай çул вăл хуçалăхри столовăй коллективне ертсе пынипе пĕрлех ытти отрасльсенче вăй хуни те унăн пĕр çул çеç мар. Пурнăçне ял хуçалăх производствине халаллана ăшă кăмăллă хĕрарăмшăн чăваш чĕлхине хисеплесси яланах малти вырăнта пулни кăмăллă пулăм. Кунпа пĕрлех С. Тимофеева тăван ен аталантарăвне ырă тўпе хывакансем пирки те тав сăмахĕ каламасăр пултараймасть. Акă иртнĕ çул вĕçĕнче Чăваш Республикинчи композиторсен Союзĕн членĕ, ЧР Тава тивĕçлĕ культура ĕçченĕ, «Екрем» халăх хорĕн ертўçи, Ярапайкассинчи вăтам шкул вĕрентекенĕ Виталий Анатольевич Романов хăй пухнă «Екрем юррисем» кĕнекен презентацине ирттерчĕ. Тăван ен культурин аталанăвĕшĕн çакăн пек пысăк ĕç тунă ĕçчене те Светлана Семеновна сăвăласа тав тăваймасăр тăраймарĕ.***

## Чĕлхе илемĕ

Тăван чĕлхе атте-анне пекех,
Эпир ăна ниçтан манмастпăр.
Сăпка юрри тăнлавĕнчен тўрех,
Мĕн ачаран ăна хаклатпăр.
Чăваш чĕлхи – тăрă çăл куç
таппи,
Халăхпа ялан пĕр тан пулни.
Çитерчĕ ак çĕртен сўле çити
Ачисене, калатпăр çеç ахти!
Ак кур! Епле Шурча каччи ăсчах,
Вăл тĕпчет чĕлхемĕре пĕрмай.
Кĕвве хывса сăмах хыççăн
сăмах
Шăрçалать, ав, юррине нумай.
Хаклă кĕнеке – юрăсен пуххи –
Çавнăç мар-и кун çути курни!
Ăна кăларчĕ Шурча Витали,
Ятлă-сумлă хамăр ял ачи!
Мăнаçланса «Екремĕн
юррисем»
Авалтан çĕн вăхăта çитсе.
Вăл çĕнелсе якалнă кĕвĕсем
Шĕл-кăварран шăранса илсе.
Халăхăн юрри – чĕлхе илемĕ,
Вăл çисет кашнийĕн пипĕтне.
Калас килет тав сăмахĕ:
«Вирлĕ!»
«Екрем юррийĕсен» авторне.

Объявления

**Итоги проведения публичного слушания по проекту решения муниципального правого акта «Об изменении разрешенного использования земельного участка» на территории Кадикасинского сельского поселения Моргаушского района ЧР.**

**27 декабря 2010 года прошли публичные слушания по проекту решения муниципального правого акта «Об изменении разрешенного использования земельного участка».**

**На указанных выше публичных слушаниях было принято следующее решение: одобрить проект муниципального правого акта «об изменении разрешенного использования земельного участка».**

* * *

**Я, собственник земельной доли Прохорова Елизавета Николаевна, объявляю о выделении земельного участка в счет земельной доли площадью 13100 кв. м. пашни, расположенного на территории землепользования бывшего СПК «Чемеево» Моргаушского района Чувашской Республики, Ярославского сельского поселения, участок расположен в юго-восточной части кадастрового квартала 21:17:150801.**

**Все претензии принимаются в течении месяца после выхода объявления в администрации Ярославского сельского поселения.**

**Я, собственник земельной доли Прохоров Петр Всеволодович, объявляю о выделении земельного участка в счет земельной доли площадью 26200 кв. м. пашни, расположенного на территории землепользования бывшего СПК «Чемеево» Моргаушского района Чувашской Республики, Ярославского сельского поселения, участок расположен в юго-восточной части кадастрового квартала 21:17:150801.**

**Все претензии принимаются в течении месяца после выхода объявления в администрации Ярославского сельского поселения.**

**Настоящим извещением уведомляем заинтересованных лиц, участников долевой собственности земельных долей единого земельного массива, расположенного на территории бывшего СПК «Чемеево» Моргаушского района Чувашской Республики, а земли собственников смежных земельных долей и участников, входящих в состав земель сельскохозяйственного назначения Моргаушского района ЧР, о проведении собрания по согласованию местоположения границ, выделяемой в счет земельной доли, расположенной по адресу: ЧР, Моргаушский район, Ярославское сельское поселение, в юго-восточной части кадастрового квартала 21:17:150801.**

**Заказчики работ, собственники в праве общей долевой собственности на земельный участок гр. Прохорова Елизавета Николаевна, проживающая по адресу: ЧР, Моргаушский район, д. Елжихово. Паспорт серии 9706 № 476458 выдан Моргаушским РОВД Чувашской Республики от 27.10.2006 г.; гр. Прохоров Петр Всеволодович, проживающий по адресу: ЧР, Моргаушский район, д. Елжихово. Паспорт серии 9704 № 331841 выдан Моргаушским РОВД Чувашской Республики от 03.11.2005 г.**

**Согласование местоположения границ состоится 01.02.2011 г. по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5 офис ООО «Аршин» с 8 до 17 часов.**

**Возражения по проекту межевого плана и требования о проведении согласования местоположения границ земельного участка на местности необходимо направлять по адресу: 429530, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5 офис ООО «Аршин».**

# Йĕлтĕр йĕрĕ таптанчĕ

Спорт

Тăтăшах юр çуса тăни кăçал йĕлтĕрçĕсемшĕн пысăк савăнăç. Спорт сезонне те вăхăтрах уçма май пулчĕ районта.

Иртнĕ шăмат кун, декабрĕн 25-мĕшĕнче, йĕлтĕрçĕсем эстафетăра ăмăртрĕç. Тапхăрсене палăртса яшсемпе хĕрсем, арçынсемпе хĕрарăмсем йĕлтĕр йĕрĕ çине тухрĕç. 3 çухрăмлă дистанцие йĕлтĕрпе чупса тухма йывăр мар-и тесе ыйтсан хуравĕ тĕрлĕрен пулчĕ. Пĕрисем çав кун çеç йĕлтĕр çине тăнине каларĕç, теприсем вара юр çума тытăннăранпах йĕлтĕр çинчен «анманнине» пĕлтерчĕç.

Йĕлтĕрçĕсене çак кун район администрацийĕн пуçлăхĕпе ытти ертӳçĕсем кăна мар, Хĕл Мучипе Юр Пике те саламласа куччеНеçсемпе сăйларĕç, ăнăçлă старт сунчĕç.

Кам мĕнле ăмăртнине палăртма вăхăт сахалах кирлĕ пулмарĕ. Старта 36 команда тухрĕ. Вĕсенчен 22-шĕ – шкулсем, 7-шĕ – предприятисем, 7-шĕ – ял тăрăхĕн командисем.



Ăмăрту хыççăнхи пĕтĕмлетӳ çапла пулчĕ. Вăтам шкулсен командисем хушшинче Ярапайкассинчи шкул команди çĕнтерчĕ. Хыççăнхи вырăнсенче – Калайкасси шкулĕн тата Муркаш шкулĕн командисем.

Тĕп шкулсем хушшинче Сыпайсем мала тухрĕç. Иккĕмĕшпе виççĕмĕш вырăнсенче – Тойкилтĕсемпе Кашмашсем.

Ĕç коллективĕсен командисем çаксем палăрчĕç: малта «Моргаушская» чăхчĕп фабрикин команди, хыççăнхи вырăнсенче – «Свобода» хуçалăхăн тата районти шалти ĕçсен пайĕн командисем.

Çĕнтерӳçĕсен аллинче – кубоксемпе медальсем. Призлă вырăн йышăнакансем те медальсемпе дипломсемсĕр юлмарĕç.

Шомикри тĕп шкулăн тата «Передовик» хуçалăхăн командисене уйрăммăн палăртса ятарлă парнесемпе чысларĕç.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

# Чиркӳ тăррине çĕнĕрен витмелле

Иртнĕ вырсарни кун çĕрĕпе çунă юрпа ашса тухма йывăр пулмарĕ пире, Мăн Сĕнтĕрти чиркĕве çӳрекенсене. Мĕншĕн тесен хальхинче чиркӳре эпир хамăр кăна пулмарămăр, Шупашкарти арçынсен мăнастирĕн пуçлăхĕ Василий атте (Паскье) пирĕнпе пĕрле кĕл тума кăмăл турĕ.

Хаклă хăна – француз, нумай ачаллă çемьере çуралса ӳснĕ, хурашур сахал мар курнă хăйĕн пурнăçĕнче. Турра çирĕп ĕненни вара ăна йывăрлăхсене çĕнтерме пулăшса пынă. Хăйĕн çăмăл мар, анчах çав тери интереслĕ пурнăçĕ çинчен те, чуна пăшăрхантаракан ытти нумай-нумай ыйту тавра та калаçрĕ вăл пирĕнпе.

Кĕлĕ хыççăн Василий атте чиркӳ çумĕнчи вырсарни шкулне çӳрекенсемпе те тĕл пулчĕ.

Тӳрех палăрчĕ: вăл питĕ ăслă та анлă тавра курăмлă çын. Василий атте вĕрентнине те итлеме кăмăллă пулчĕ.

– Евангелире çапла каланă: пĕр çын ĕçкĕ-çикĕ тунă та хăйĕн тарçине хăнисене чĕнме янă, анчах лешсем тĕрлĕ сăлтав тупса пĕри те пыман. Эпĕ вара вĕсем пек тăвас тесе шутламарăм. Хисеплесе чĕнтĕр те, пĕтĕм ĕçе пăрахса кунта килтĕм. Мĕншĕн тесен сирĕн чиркӳ настоятельне – Игнатий аттене – питĕ хисеплетĕп, – çапла каласа савăнтарчĕ Шупашкартан килнĕ хăна.

Унтан вăл чиркĕве илемлетес енĕпе тăрăшса ĕçленĕшĕн ĕненекенсене тав турĕ:

– Чиркӳ таса та илемлĕ сирĕн. Юрлакансем те ангелсем пек юрлаççĕ. Хăвăр та ырă кăмăллă пулни курăнать. Пĕлетĕп, Турă çуртне эсир нумай пулăшатăр. Уншăн чунтан тав тăватăп. Анчах Игнатий аттепе эпир çапла килĕшӳ турăмăр: çитес çул чиркӳ тăррине çĕнĕрен витмелле.

Василий аттен сăмахĕсем пире «Çĕнтерӳ ялавĕ» район хаçатне çырма хистерĕç. Темĕнле пултаруллă пулсан та çав тери пысăк ĕçе пĕччен ăçтан тăвайăн? Çавăнпа эпир районта пурăнакансене чĕнсе каласшăн. Сире чылайăшне Мăн Сĕнтĕр чиркĕвĕнче ят хунă. Халĕ тăтăшах килсе çӳреймесен те манса ан кайăр ăна. Хамăр пурнăçри йывăр самантсенче кăна мар, чиркӳ пирĕнтен пулăшу ыйтнă чухне те аса илĕр Турра.

Евангелире каланă хăна пуçтаракан çын вара вăл Атте Турра пĕлтерет, хăнисене чĕнме кайнă тарçă – Иисус Христоса. Турă хăйĕн Ывăлĕ урлă пире пурсăмăра та Çӳлти патшалăха чĕнет. Унăн йыхравне тĕрлĕ сăлтав тупса пăрахăç тăвас марччĕ.

**З. ОВЧИННИКОВА, Г. СТОЛЯРОВА.**

Афиша

# Вăхăта усăллă ирттерер

Çĕнĕ çул 10 кунлă «каникулпа» пуçланнине хăнăхрăмăр ĕнтĕ. Апла пулин те çак вăхăта та усăллă, активлă ирттерме тăрăшмалла. Сăмахран, спорт мероприятийĕсене хутшăнса.

Акă январĕн 5-мĕшĕнче «Сывлăх» ФСК-ра шывра ишессипе «Атте, анне тата эпĕ – спорт çемйи» ăмăрту иртет. Çĕнтерӳçĕсене икĕ ушкăнра палăртаççĕ: пĕрремĕшĕнче – 12 çултан, иккĕмĕшĕнче 14 çултан кĕçĕнрех ачасем пулмалла. Паллах ашшĕпе тата амăшĕпе пĕрле. Ку ăмăрту 11 сехетре пуçланмалли паллă. Ун хыççăнах бассейнра тепĕр савăнăçлă ăмăрту иртет. Пурне те Хĕл Мучин тата Сурхури уявĕн парнисене çĕнсе илме йыхравлаççĕ. Тĕрлĕ майсемпе 50 метр шывра ишсе ăмăртма чĕнеççĕ. Комплекслă ишев тăршшĕ вара 100 метр пулĕ. Шкулта вĕренекенсем те, тĕрлĕ вырăнсенче ĕçлекенсем те – пурте парнесене тивĕçме васкăр.

Хоккей вăййине курма Муркашри хоккей курупки çине январĕн 6-7-мĕшĕсенче чĕнеççĕ. Ăмăртăва хуçалăхсен, организацисемпе предприятисен, учреждениcемпе ял тăрăхĕсен хоккей командисене йыхравлаççĕ. Ăмăрту 10 сехетре пуçланать.

Январĕн 7-мĕшĕнчех физкультурăпа спорт комплексĕнче волейбол вăййисем те пулĕç. 2010 çулхи ăмăртусен пĕтĕмлетĕвĕпе мала тухнă 4 команда вăй виçĕ.

Пурне те спорт ăмăртăвĕсене йыхравлатпăр.

Милици хроникинчен

# Васкакан вакка сикнĕ

Иртнĕ кунсенче М–7 федераллă çулăн пирĕн район территорийĕпе иртекен пайĕ çинче икĕ пысăк инкек пулса иртрĕ.

Декабрĕн 22-мĕшĕнче Шупашкар енне каякан маршрут автобусĕн водителĕ çанталăк условийĕсене те, трасса çинче транспорт питĕ нумай çӳренине те шута илмен. Палăртнă вырăна часрах çитес тенĕ пуль. Анчах та çул çинче вăл руле «çухатнă». Çавăнпа автобус самантрах хирĕç килекен машинăсен речĕ çине тухса каять. Çăмăл автомашинăпа çапăнать. Инкекре суранланнă 4 пассажира Муркашри тата Шупашкарти больницăсене леçме тивет.

Декабрĕн 24-мĕшĕнче çĕрле «Ока» машина водителĕ вырăнтах вилсе каять. Ăна та хирĕç килекен машинăсен речĕ çине тухса кайнă автобус пырса çапать.

Çакăн пек тĕслĕхсем ан пулччăр тесе çул çинче питĕ тимлĕ пулмалла. Çанталăк та яланах асăрхануллă пулма хистет.

**А. ЩЕРБАКОВ, ГИБДД инспекторĕ.**

Тав тăватпăр

Пирĕн юратнă аннене, асаннене, хаклă çыннăмăра – Нискасси ялĕнче пурăннă Зоя Ивановна Ванюшкинăна юлашки çула ăсатма пулăшнăшăн, çак йывăр хуйхăна пирĕнпе пĕрле пайланăшăн ял-йыша, тăвансене, пускилсене пысăк тав сăмахĕ калатпăр.

**Ванюшкинсен, Симаковсен, Сторожевсен, Соловьевсен çемйисем.**

Объявления

Мы, собственники земельных долей Митрофанова Н.И., Митрофанов В.Н., Митрофанова Р.В., Митрофанов Л.Н., Митрофанова Е.Э., объявляем о выделении земельного участка в счет земельной доли площадью по 1,27 га пашни каждый, расположенного на территории землепользования СХПК им. Чапаева Моргаушского района Чувашской Республики, Чуманкасинского сельского поселения, участок расположен в северной части кадастрового квартала 21:17:220701.

Все претензии принимаются в течении месяца после выхода объявления в администрации Чуманкасинского сельского поселения.

Настоящим извещением уведомляем заинтересованных лиц, участников долевой собственности земельных долей единого земельного массива, расположенного на территории СХПК им. Чапаева Моргаушского района, а земли собственников смежных земельных долей и участников входящх в состав земель сельскохозяйственного назначения Моргаушского района ЧР, о проведении собрания по согласованию местоположения границ выделяемых в счет земельных долей, расположенных по адресу: ЧР, Моргаушский район, Чуманкасинское сельское поселение, в северной части кадастрового квартала 21:17:220701.

Заказчики работ, собственники в праве общей долевой собственности на земельный участок гр. Митрофанова Нина Ионовна, проживающая по адресу: ЧР, Моргаушский район, д. Одаркино, ул. Афанасьева, д. 19. Паспорт серии 9702 № 626111 выдан Моргаушским РОВД Чувашской Республики от 30.10.2002 г.; гр. Митрофанов Валерий Николаевич, проживающий по адресу: ЧР, Моргаушский район, д. Одаркино, ул. Афанасьева, д. 19. Паспорт серии 9701 № 283105 выдан Моргаушским РОВД Чувашской Республики от 28.09.2001 г.; гр. Митрофанова Роза Валентиновна, проживающая по адресу: ЧР, Моргаушский район, д. Одаркино, ул. Анисимова, д. 41. Паспорт серии 9702 № 622415 выдан Моргаушским РОВД Чувашской Республики от 28.06.2002 г.; гр. Митрофанов Лев Николаевич, проживающий по адресу: ЧР, Моргаушский район, д. Одаркино, ул. Анисимова, д. 41. Паспорт серии 9701 № 283350 выдан Моргаушским РОВД Чувашской Республики от 17.10.2001 г.; гр. Митрофанова Елена Эркольевна, проживающая по адресу: ЧР, Моргаушский район, д. Одаркино, ул. Анисимова, д. 41. Паспорт серии 9701 № 283104 выдан Моргаушским РОВД Чувашской Республики от 28.09.2001 г.

Согласование местоположения границ состоится 01.02.2011 г. по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5 офис ООО «Аршин» с 8 до 17 часов.

Возражения по проекту межевого плана и требования о проведении согласования местоположения границ земельного участка на местности необходимо направлять по адресу: 429530, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5 офис ООО «Аршин».

***

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории «земли сельскохозяйственного назначения» с кадастровым номером 21:17:271401:1103, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Юськасинское сельское поселение, участок расположен в северо-восточной части кадастрового квартала 21:17:271401, для ведения личного подсобного хозяйства, площадью 6000 кв.м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.

***

Мы, собственники земельных долей Скобелева Т.А., Скобелева Ф.А., Сухова В.В., Васильев В.В., Сухова В.В., Сухов В.А., Сухова Е.А., объявляем о выделении земельного участка в счет земельной доли площадью по 1,28 га пашни каждый, расположенного на территории землепользования бывшего СХПК «Дружба» Моргаушского района Чувашской Республики, Ярабайкасинского сельского поселения, участок расположен в южной части кадастрового квартала 21:17:121301.

Все претензии принимаются в течении месяца после выхода объявления в администрации Ярабайкасинского сельского поселения.

Мы, собственники земельных долей Романов Алексей Иванович, Романов Вячеслав Алексеевич, объявляем о выделении земельного участка в счет земельной доли площадью по 1,38 га пашни, расположенного на территории землепользования бывшего СХПК «Новая Юнга» Моргаушского района Чувашской Республики, Юнгинского сельского поселения, участок расположен в восточной части кадастрового квартала 21:17:080901.

Все претензии принимаются в течении месяца после выхода объявления в администрации Юнгинского сельского поселения.

Настоящим извещением уведомляем заинтересованных лиц, участников долевой собственности земельных долей единого земельного массива, расположенного на территории бывшего СХПК «Новая «Юнга» Моргаушского района Чувашской Республики, а земли собственников смежных земельных долей и участников, входящих в состав земель сельскохозяйственного назначения Моргаушского района ЧР, о проведении собрания по согласованию местоположения границ, выделяемой в счет земельной доли, расположенной по адресу: ЧР, Моргаушский район, Юнгинское сельское поселение, в восточной части кадастрового квартала 21:17:080901.

Заказчики работ, собственники в праве общей долевой собственности на земельный участок гр. Романов Алексей Иванович, проживающий по адресу: ЧР, Моргаушский район, с. Юнга, ул. Б. Чуваки. Паспорт серии 9702 № 622363 выдан Моргаушским РОВД Чувашской Республики от 27.06.2002 г.; гр. Романов Вячеслав Алексеевич, проживающий по адресу: ЧР, Моргаушский район, с. Юнга, ул. Б. Чуваки. Паспорт серии 9701 № 282746 выдан Моргаушским РОВД Чувашской Республики от 04.09.2001 г.

Согласование местоположения границ состоится 01.02.2011 г. по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5 офис ООО «Аршин» с 8 до 17 часов.

Возражения по проекту межевого плана и требования о проведении согласования местоположения границ земельного участка на местности необходимо направлять по адресу: 429530, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5 офис ООО «Аршин».

***

Я, собственник земельной доли Волкова Нина Михайловна, объявляю о выделении земельного участка в счет земельной доли площадью 26800 кв. м. пашни, расположенного на территории землепользования бывшего СХПК «Волга» Моргаушского района Чувашской Республики, Ильинского сельского поселения, участок расположен в северо-восточной части кадастрового квартала 21:17:031001.

Все претензии принимаются в течении месяца после выхода объявления в администрации Ильинского сельского поселения.

Настоящим извещением уведомляем заинтересованных лиц, участников долевой собственности земельных долей единого земельного массива, расположенного на территории землепользования бывшего СХПК «Волга» Моргаушского района Чувашской Республики, а земли собственников смежных земельных долей и участников, входящих в состав земель сельскохозяйственного назначения Моргаушского района ЧР, о проведении собрания по согласованию местоположения границ, выделяемых в счет земельных долей, расположенных по адресу: ЧР, Моргаушский район, Ильинское сельское поселение, в северо-восточной части кадастрового квартала 21:17:031001.

Заказчик работ, собственник в праве общей долевой собственности на земельный участок гр. Волкова Нина Михайловна, проживающая по адресу: ЧР, Моргаушский район, д. Вурманкасы. Паспорт серии 9702 № 623985 выдан Моргаушским РОВД Чувашской Республики от 22.08.2002 г.

Согласование местоположения границ состоится 01.02.2011 г. по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5 офис ООО «Аршин» с 8 до 17 часов.

Возражения по проекту межевого плана и требования о проведении согласования местоположения границ земельного участка на местности необходимо направлять по адресу: 429530, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5 офис ООО «Аршин».

Пĕлтерӳсем. Объявления

Продаем доски хвойные 25х150мм, 50х150мм, 50х200мм; брус любого сечения. Цена договорная. Доставка по району бесплатно. Тел.: 8-903-346-40-58. 3-10.




Адрес: с. Моргауши, ул. 50 лет Октября, д. 4. Тел.: 62-3-80. 5-5.

Продаю: кирпич одинарный М-100; М-125; М-150; керамический полуторный М-125; двойной керамический; силикатный белый, желтый; КББ р-р 20х20х40; красный половняк, некондиция, гравмассу, керамзит. Доставка и разгрузка на манипуляторе. Документы. Тел.: 8-903-358-20-97, 8(8352) 44-20-97. 8-9.

***

Утерянный аттестат Б № 0754106, выданный МОУ «Большесундырская СОШ» в 2003 году на имя Маринкиной Марины Леонидовны, считать недействительным.

***

Закупаем бычков, телок, коров, свиней (живым весом). Тел.: 8-905-343-46-23, 60-7-05. 2-5.

***

Ĕне, вăкăр, пăру туянатăп. Тел.: 60-7-10, 8-905-343-60-63. 3-8.

***

Апрель уйăхĕнче пиллĕкмĕш пăруламалли хура-шурă тĕслĕ ĕне сутатăп. Хакĕ калаçса татăлнă тăрăх. Тел.: 8-906-135-50-91. Галина.

Мăн Сĕнтĕр больница коллективĕ кунта врач-рентгенолог пулса ĕçлекен В.П. Кузьминăн юратнă

**АМĂШĔ**

вилсе кайнă пирки тăванĕсемпе пĕрле тарăннăн хурланни çинчен пĕлтерет.

**Хаçатăн çитес номерĕ январĕн 12-мĕшĕнче тухать.**

Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат

УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:
Чăваш Республикин Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерстви.
ЧР Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерствин «Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ» автономи учрежденийĕ.

Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.

АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.
ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, яваплă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕ - 62-1-38.
Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru

Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2009 çулхи раштавăн 7-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00073 № регистрациленĕ.

Калăпăшĕ 2 пичет листи.
Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.
Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.
Хаçат чăвашла юн тата шăмат кунсерен тухать.
Номер дежурнăйĕ Макарова Р.А.
Пичете панă 29.12.2010 ç.
Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин, чăннипе – 17 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 4057.

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.